# Г.Н. ВОЛКОВ АКАДЕМИК ПЕХИЛЛЕСЕ ХĂВАРНĂ ВĔРЕНТӲ

***Анисия Павловна Игнатьева,*** *Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ, Шупашкарти чăваш чĕлхипе литература пĕрлĕхĕ çумĕнчи «Г.Н. Волков академикăн чун-чĕм эткерлĕхĕ» пĕрлешĕвĕн ертӳçи*

Пурнăç хăй те вăл тĕлĕнтермĕш. Çыннисем вара тата та тĕлĕнмелле. Мĕнле ун пек? Хуравне вĕçне-хĕрне çитиччен эпир сирĕнпе нихăçан та тупса пĕтерейменĕпĕр. Тупса пĕтерейсен, хăй тĕнчи те пĕтет. Эпир, чăваш чĕлхи вĕрентекенĕсем, ялан шыравра. Хамăр тĕпчетпĕр, ачасене явăçтаратпăр.

Пирĕншĕн тĕлĕнмелле çынсенчен пĕри вăл – Геннадий Никандрович Волков, Чăваш Республикин хисеплĕ гражданинĕ, тĕнчипе паллă этнопедагог.

Этнопедагогăн ăсĕ çивĕч, шухăшĕ тарăн. Унăн «Аннемçĕм, анне..» сăввинех илер. «Çак сăвă 1946-мĕш çулхи пуш уйăхĕн 9-мĕш кунĕнче çырăнчĕ. Ку – анне çуралнă кун, вăл хĕрĕх иккĕ тултарса хĕрĕх виççĕ çине пуснăччĕ», – аса илсе каласа паратчĕ Геннадий Никандрович.

Акă, асăннă сăвăри юлашки икĕ йĕркинех илер:

*Пĕлеп, ман туррăм, эс камне,*

*«Аннемçĕм» теп сана, анне.*

Г.Н. Волковшăн анне – турăпа пĕр тан çын. Чăннипех те, ачан малашнехи пурнăçĕ вăл хăйĕн амăшне еплерех хисеплесе ӳснинчен питех те нумай килет. Çавăнпа та эпир шкулта ачана хăй амăшне хисеплесе ăна кил-çуртра хăй пултарнă таран пулăшма, юратнине палăртса амăш чĕлхипе калаçма хистетпĕр.

Ача чăваш чĕлхине юратса вĕрентĕр тесе тĕрлĕ мелсем шырама тивет. Акă, пĕр тĕслĕх. Грамматика материалĕпе усă курса пурнăçламалли хăнăхтару вырăнне киле урăхларах ĕç те пама пулать вĕт-ха. Сăмахран, ашшĕ-амăш чăваш пулсан – килте вĕсене пулăшнă май чăвашла пуплесси, урăх халăх çынни пулсан – урокра вĕреннĕ сăмах çаврăнăшĕсене, предложенисене пĕрле ларса аса илесси; килте, шкулти учитель вырăнĕнче пулса, ашшĕ-амăшне вĕрентесси. Çакăн пек киле ĕç те кăсăклă пулмалла: ашшĕ-амăшне урокра вĕреннĕ юрра юрласа памалла, килтисене питех те килĕшрĕ пулсан – вĕсене вĕрентмелле. Ача хăй мĕн пĕлнине тепĕр çынна вĕрентсен – вăл çав материала тата та çирĕпрех астуса юлать. Учитель çак вăрттăнлăхпа пурнăçра яланах усă курма хистет. Ачасем халăх вĕрентевĕн çак мелĕ чăннипех пулăшнине ĕçре ĕненсе, малашне хăйсемех ирĕклĕн усă курма хăнăхса пыраççĕ. Ачан чăваш чĕлхине вĕренес туртăм урокран-урока ӳссе пытăр. Вăрттăнлăхĕ – учитель халăх вĕрентĕвĕн асамлă меслечĕсемпе мелĕсене алла илнинче.

Чăвашла пĕлмен чăвашсен миме аталанăвĕ çут çанталăк хушнă пек аталанса пыраймасть. Анне чĕлхинче вара ăнлантарса пама май çук темле асамлă вăй пур. Çак вăй ачара пытарăнса тăракан хăвата вăратса, çитĕнӳсем тума çул уçса пырать. Шкулти ашшĕ-амăш пухăвĕсенче çемьере чăваш хĕрарăмĕ хăйĕн ачипе чăвашла калаçнинче темле асамлă хăват пуррине ĕнентерме тăрăшмалла.

Учителĕн ытларах ачан ашшĕ-амăшĕпе пĕр чĕлхе тупма пĕлмелле. Вăл ачин усал енĕсене хăй те пит лайăх пĕлет. Вĕрентӳçĕн ачара тупса палăртнă ырă енĕсем çинчен ытларах калаçмалла, вĕсене аталантарма пулăшмалла.

Паянхи ачасене вунӑ ҫул каяллахи ачасемпе танлаштараймастӑн. Ман шутпа, кунта вӗсен айӑпӗ пӗрре те ҫук. Компьютер самани, обществӑри рынок хутшӑнӑвӗ ачасене тӗпрен улӑштарать. Хальхи вӑхӑтра шкулта ачасемпе ӗҫлеме ҫӑмӑлах мар.

Килте ачан турӑ вырӑнӗнче амӑш пулмалла пулсан, шкулта – учитель. Ачана пурнӑҫӑн усал йӗркисенчен пирӗн, шкулти амӑшӗн, упрамалла, ӑс-тӑна вӗрентмелле. Пирӗн темле лару-тӑрура та ачапа пӗр чӗлхе тупса ӑна вӗренме хавхалантармалла. Ҫӗнӗ мелсемпе меслетсем шырама кирлӗ мар. Вӗсене халӑхран пӗрчӗн-пӗрчӗн пуҫтарса Г.Н. Волков академик пирӗн пата илсе ҫитернӗ. Пирӗн халӑх вӗрентӗвне тӗпе хурса ӗҫлемелле, ун мелӗсене алла илмелле. Ку енӗпе этнопедагогӑн кӗнекисене шӗкӗлчемелле.

Г.Н. Волков академик хӑйӗн наука ӗҫӗсемпе ҫӗр ҫинче чи хӑватлӑ мел те, эмел те – Юрату – иккенне ӗнентерчӗ. Уйрӑмах ҫак мелпе учительсем хӑйсен ӗҫӗнче кашни самантрах усӑ курмаллине палӑртатчӗ ученӑй. Геннадий Никандрович ӑс парса хӑварни пур учительшӗн те усӑллӑ та паянхи кун тата та ытларах вырӑнлӑ пулмалла: «Хамӑн (килти) тата хамӑн мар (шкулти) ачасем анчах пулаҫҫӗ. Хамӑн мар ачасем чӑн-чӑн вӗрентекеншӗн пачах та ют ачасем мар. Шкул ачисене учителӗн хӑйӗн ачисем пек юратма вӗренсе ҫитмелле. Юрату хальлӗхе тӗлӗрсе тутлӑн ҫывӑрать пулсан, ӑна вӑратмалла. Педагогикӑра пӗрремӗш вырӑнта пӗлӳ мар, Юрату пулмалла. Юратакан ачасем патне учитель хӑех пӗлӳсӗр пыма ниепле те хӑяймӗ, юратнӑ ачасемпе эсӗ хӑвах хаяр та, усал та пулаймӑн. Ҫак юратушӑнах эсӗ хӑвӑн пӗлӗвне ҫулран-ҫул ӗҫрен ыйтнипе мар, чун хушнипе ӳстерсе пырӑн. Ачасен юратӑвӗшӗнех эсӗ хӑвна, ху тӑрӑшса пухнӑ пӗлӗвне юратма пуҫлӑн. Юрату хӑй учителе ҫирӗп ӑс-тӑнлӑ, тарӑн пӗлӳллӗ, анлӑ тавра курӑмлӑ, ырӑ кӑмӑллӑ та ӑш пиллӗ пулма хистет. Ҫут ҫанталӑк вӑрттӑнлӑхӗ, асамлӑхӗ йӑлтах Юратура».

Академик пиллесе-пехиллесе хӑварнӑ пек, эпӗ хам вӗрентекен ачасене яланах мухтатӑп. Хӑйӗн ҫинчен ырласа каланине кам килӗштермест? Ачана мар, ҫитӗннӗ ҫынна та кӑмӑллӑ. Учителӗн ачасене хавхалантарма, ҫунат хушма ӑста пулмалла, вӗсене юратни ҫинчен, кашни ачах талантлӑ пулни ҫинчен каламалла. «Пӗлетӗр-и, эсир – пурте генисем», – тетӗп эпӗ хамӑн шкулти ачасене уроксенче. Ҫакӑ ачасене питӗ хӑпартлантарать. Вӗсене час-час пуҫран шӑлатӑп, ыталатӑп. Ҫакна кӗҫӗн класс ачисем питӗ килӗштереҫҫӗ. Ачан ҫемьинче ҫак мелпе ашшӗ-амӑшӗ питӗ сайра е пачах та усӑ курманнине туятӑп.

Аслӑрах классенче урока ачасем пӗр-пӗрне ырӑ сӑмахсемпе хавхалантарнинчен пуҫлатӑп. Ваттисем калашле, ырӑ сӑмах – ҫу кунӗ, усал сӑмах – хӗл кунӗ. Ачасем халӑх юррисене килӗштерни савӑнтарать. 8-9 класс ачисем хӑйсем кашни урокрах юрӑ юрлама ыйтаҫҫӗ. Мана эпӗ хам купӑспа калама пӗлни самай пулӑшать. Шел, ачасен ытларах пайӗ хӑйсене амӑшӗсем сӑпка юрри юрласа ҫывӑрттарнине астумаҫҫӗ. Куншӑн ача айӑплӑ-и? Паллах, ҫук.

«Кам малта пырать – вӗсене нихӑҫан та ҫӑмӑл пулман», – тетчӗ Г.Н. Волков. – Эсир – чӑваш чӗлхи учителӗсем, яланах малти ретре пыракансем пулмалла. Сирӗнте чӑвашӑн малашлӑхӗ. Сирӗн умӑрта яланах тӗллев пултӑр! Йывӑрлӑхсенчен ан хӑрӑр. Вӗсене пула эпир ӳсетпӗр».

Эпĕ пĕрре те иккĕленместĕп: Геннадий Никандрович Волков пухса хатĕрленĕ халăх вĕрентĕвĕн асамлă мелĕсем пире ачасене ăнланса тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеме, ачасен шанчăклă юлташĕ вырăнĕнче пулса вĕсене йывăрлăхсене çĕнтерсе, хамăр вĕсемшĕн тĕслĕх вырăнĕнче пулса хавхалантарса пыма пулăшса пырĕç.

Апла пулсан, çутă малашлăха ĕненсе, халăх вĕрентĕвне алла илсе, ăна хамăр ĕçре тĕпе хурса, пĕр-пĕрне ыр сăмахсемпе хавхалантарса, хамăрăн кулленхи ĕçпе киленсе килĕшӳпе юратура пурăнар! «Килĕшӳпе юратура пурăнакан ачамсем пиллĕхлĕ». Çапла пултăр! Çапла пултăр! Çапла пултăр!